Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | 134 N (4703) | *1998 çулхи ноябрь (чӳк) уйăхĕн 25-мĕшĕ, юнкун* | *Палăртнă хакпа.*

*** Газ пурне те кирлĕ**

## Вĕсене инçетри ялсенче те, хулан кăнтăр микрорайонĕнче те кĕтеççĕ

***"Газпромстрой" пĕрлешĕвĕн акционер обществин Нурлатри участокĕн биографийĕ пысăках мар-ха: 1997 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен ĕçлеме тытăннă, пурĕ 17 çынна пĕрлештерсе тăрать. Анчах та районти газовиксен отрячĕпе пĕрлешсе, вăл чылай ĕç пурнăçлама пултарнă. Участок коллективĕ поселоксем хушшинчи тата поселоксенчи газ пăрăхĕсене, ГРП, пурăнмалли çуртсене, котельнăйсене газ кĕртме монтажлать, хурçă тата полиэтилен пăрăхсемпе ĕçлессинче опыт пухать.***

- Хальхи вăхăтра эпир, тĕпрен илсен, виçĕ участокра ĕçлетпĕр: хресченсен хуçалăхĕсен "Комбайн" ассоциацийĕн Кивĕ Амзя ялĕнчи пурăнмалли çуртсене çутçанталăк газĕ кĕртетпĕр, Заречнăй поселокĕнчен Чăваш Тĕкĕрмел ялне çити пысăк пусăмлă газ пăрăхĕ хыватпăр, - тет участок начальникĕ Г.Н.Бикинеев.

Паллах, пĕр çĕрте ĕçлемен бригадăсен ĕçне йĕркелеме çăмăлах мар ĕнтĕ. Анчах та район администрацийĕн пуçлăхĕ çивĕч требовани кăларса тăратнă: газ кĕртес тĕлĕшпе республика программи вăйра чухне, газ пăрăхĕсене районти чи инçетре вырнаçнă ялсене çитиччене хывмалла. Бикинеев ертсе пыракан организаци, ытти газовиксем пекех, çак йывăр задача пурнăçлама тăрăшать. Кивĕ Амзяра вĕсем иккĕмĕш çул ĕçлеççĕ ĕнтĕ. Кунта районта пĕрремĕшĕ пулса поселокри газ пăрăхĕ хывнă çĕрте полиэтилен пăрăхсемпе усă курма тытăннă. Эпир ун çинчен маларах та çырнăччĕ ĕнтĕ, анчах çакна та хушса хăварас килет, полиэтилен пăрăхсене çĕр айне хывсан тĕрексем кирлĕ мар, çакă вара материалсене перекетлеме, авари пулассине сирсе яма пулăшать. Газовиксем кăçал кунти ĕçсене пĕтĕмпех вĕçлеме шутлаççĕ, районти чи инçетре вырнаçнă ялсенчен пĕри вара газлă пулĕ.

Хулара газ кĕртес ĕçре те хăйĕн çитменлĕхĕсем пур. Участокри яшсене хулан хĕвелтухăç пайĕнчи Циолковский, Маяковский, Тукай урамĕсенче ĕçлеме тӳр килнĕ. Циолковский урамĕнче пурăнакансем çутçанталăк газĕпе усă кураççĕ ĕнтĕ, икĕ урамра вара заказчиксем укçа вăхăтлă тӳлеменнипе йӳнĕ газпа усă кураймаççĕ. Шел пулин те, ку вара пĕртен-пĕр тĕслĕх мар. Çакăн пекки Карл Маркс проспектĕнчи икĕ çуртра та пулнă. Заказчик - МПП ĕçшĕн тӳлемен пулин те, участок коллективĕ ветерансен çуртне газ кĕртес ĕçе тӳлевсĕрех пурнăçлама килĕшнĕ. К.Маркс проспектĕнчи пĕрремĕш çуртра пурăнакансен вара пăрăхсем хывнă хыççăн та газ кĕртессе тата çулталăк çурă кĕтме тӳр килнĕ. Ку вара, участок ĕçшĕн çавăн чухлĕ вăхăт хушши укçа илейменнине пĕлтерет. Çав вăхăтрах ку ĕç укçи тӳлессинче, материалсем туянассинче тата ытти ĕçсене пурнăçлассинче те йывăрлăхсем кăларса тăратать.

Участок ĕçченĕсем чугун çул поселокĕнчи çуртсене газификацилес ĕçсене те пурнăçлаççĕ. Çапла, полиэтилен пăрăхсемпе усă курса, вĕсем Анат Нурлатран тытăнса Киров урамне çити пысăк пусăмлă газ пăрăхĕ хывнă, икĕ шкаф установки вырнаçтарнă. Халь вара Линейная, Садовая, Овражная, Куйбышев, Толстой урамĕсенчи пурăнмалли çуртсене газ кĕртес ĕçсене пурнăçлаççĕ. Çуртсен хуçисем укçа тӳлес ыйтăва вăхăтлă татса параймаççĕ, укçа çукки, çитменни хальхи вăхăтри чи çивĕч ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Участок монтаж ĕçĕсене 1997 çулхи хаксемпе пурнăçланине те палăртса хăвармалла, пĕр çурта газ кĕртме 2,3-2,5 пин тенкĕ кирлĕ. Çитес çултан çак ĕçе пурнăçлама 5-6 пин кирлĕ пулать, çавăнпа та çуртсен хуçисен укçа памалли усăллă самантпа усă курса юлма тăрăшмалла.

Заречнăй поселокĕнчен Чăваш Тĕкĕрмелне çити пысăк пусăмлă газ пăрăхне питĕ йывăр условисенче хывма тӳр килет. Кунта шыв-шурлă вырăнсем нумай, вĕсенчен иртесси вара ансатах мар. Апла пулин те тĕп трасса Ялавăра çити хывнă, юлашки пункт патне çитме тата 1 километр юлнă. Çак ĕçе çулталăк вĕçлениччен пурнăçлама палăртнă. Газовиксене Ялавăрти В.Сайкин ертсе пыракан "Нива" кооператив пысăк пулăшу панă. Паллах, çак пулăшу яла газ кĕртес ĕçсене хăвăртлатма пулăшнă. "Газпромстрой" начальникĕ Р.Ахмеров Ялавăр ялне Республика суверенитечĕн кунĕнче - августăн 30-мĕшĕнче çутçанталăк газĕ пама шантарнине астăватăр пулĕ. Шантарма çăмăл, пурнăçлама вара... Ĕç тытăнса тăнин сăлтавне палăртма ансатах мар, вăл мĕнпур вак-тĕвекрен пуçтарăнать вĕт. Çапах та газовиксем кăçал яла çутçанталăк газĕ çитессе шантараççĕ. Кунта ăста кадрсем вăй хураççĕ. Виктор Бикинеев, Алексей Трофимов, Федор Бикенеев сварщиксем, Эдуард Таймуллин слесарь полиэтилен пăрăхсемпе усă курмалли технологие пĕрремĕшсен шутĕнче алла илнĕ. Загит Залялов, Дмитрий Бикинеев, Владимир Садовников тата Владимир Рахчеев сварщиксем, Алексей Бикинеев, Вячеслав Анисимов, Альберт Насыбуллин слесарьсем те хăйсене хушнă ĕçе яваплăх туйса пурнăçлаççĕ. Материалсем турттаракан Юрий Дементьев та хăйĕн ĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама тăрăшать. Ĕçе вĕçлессине техника документацийĕсемпе ĕçлекен О.Н.Алферова инженера шанса панă. Пĕчĕк коллективăн кашни членне пысăк ĕç пурнăçлама тӳр килет. Кĕскен каласан, хăйĕн ĕçне ним çукран тытăннă организацин пурлăх бази пуян теме çук ĕнтĕ. Вĕсене ятарлă оборудованипе, инструментсемпе тивĕçтереççĕ пулин те, техника пуррипе мухтанма пултараймаççĕ, вĕсен бортлă УАЗ тата ЗИЛ-131 автомашинăсем çеç. Чăнах та ĕнтĕ, хăйсем валли кантур, гаражлă склад тунă. Хăватлă техника кирлĕ пулсан вара аякки́нчен ыйтма тӳр килет (çакă ĕçсене пурнăçлассин вăхăтне тăсни паллă ĕнтĕ). Апла пулин те, икĕ çул кăна ĕçлекен организаци хăйĕн тĕп задачине тӳрĕ кăмăлпа пурнăçлама тăрăшать. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Н.Б.Мулюков каланă тăрăх, яшсем хальхи вăхăтра газ кĕртни пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнине туйса, тăрăшса, питĕ лайăх ĕçлеççĕ.

С.ХАЙРУЛЛИНА.

---

*"Ылтăн чĕре" акци*

## Пĕр-пĕрне пулăшар

Декабрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 10-мĕшĕччен хулара тата районта инвалидсен вунăкунлăхĕ иртет, унăн пуçламăшĕ Пĕтĕм тĕнчери инвалидсен кунĕпе тĕл килет. Хальхи вăхăтра вĕсене уйрăмах йывăр, вĕсене пирĕн пулăшмалла, тимлĕх уйăрмалла. Инвалидсене укçапа пулăшас текенсене вырăнти счет номерне пĕлтеретпĕр:
40205810300000170031
БИК 049241000 ИНН
1632002325

Йывăр вăхăтра пĕр-пĕрне яланах пулăшмалла, предприятисен ертӳçисем, ĕç коллективĕсем, предпринимательсем, уйрăм граждансем панă укçа çемье, чирлĕ ача амăшĕпе пĕччен пурăнакан ватă инвалидăн йывăрлăхĕсене, ыйтăвĕсене татса пама пулăшĕ. Вĕсем эпир пулăшасса питĕ шанаççĕ.

---

**Вĕрентӳ хыпарĕсем**

### Шкулта — семинар

Нумаях пулмасть хулари 4-мĕш номерлĕ шкулта районти вырăс тата тутар шкулĕсенчи тутар чĕлхине вĕрентекен учительсен черетлĕ семинарĕ иртнĕ. Семинара хутшăнакансем Н.С.Гайфуллинан тата Г.М.Тазеев учительсем irttернĕ усă уроксенче пулнă. Теори пайĕнче çак уроксене тĕплĕн тишкернĕ, кайран районти вĕрентӳ пайĕн методика пӳлĕмĕн ертӳçи В.М.Камалова аттестаци иртессин уйрăмлăхĕсемпе паллаштарнă. Семинар итогĕсене тутар чĕлхине вĕрентекен учительсен районти методика пĕрлешĕвĕн ертӳçи Р.С.Гилемшина пĕтĕмлетнĕ. Вăл тăван чĕлхене вĕрентекен преподавательсен умне палăртнă кăткăс задачăсем çинче чарăнса тăнă.

### Аллея пулĕ

"Шкулсенче чечеклĕ садсем пулччăр", - çапла чĕнсе каланă районти вĕрентӳ пайĕ. Хулари тăваттăмĕш номерлĕ шкул коллективĕ йăмрасемпе тирексен вырăнне декоративлă тĕмсем лартса ӳстерме шут тытнă. Ку енĕпе пĕрремĕш утăмсем тунă ĕнтĕ: кĕркунне вунпĕрмĕш классенче вĕренекенсем ятарлă вырăнта 40 тĕм пилеш йывăççи лартнă. Çак йăлана малалла тăссан, çитес çывăх вăхăтра шкул çывăхĕнче илемлĕ аллея ӳссе ларĕ.

### Теплицăра - çуркунне

Урамра сивĕ хĕл, теплицăра вара - çуркунне: розăсем, тюльпансем, каллăсем чечеке ларнă. Теплица ĕçченĕсем кăçалхи хĕл викторин, редискăн пуян тухăçне пухса илме шанаççĕ, халь вара кашни кун йӳнĕ хакпа энĕс, петрушка сутаççĕ, вĕсемпе нефтебаза столовăйне тивĕçтереççĕ.

- Çулла теплицăра юсав ĕçĕсене пурнăçларĕç, çавăнпа та халь кунта мĕнпур ӳсентăран лайăх çитĕнет, - тет Т.Н.Белянина. Вĕсем-ăшша тата хăйсене пăхнине юратаççĕ вĕт.

### Çĕрулми çителĕклĕ пулĕ

Хальхи вăхăтра шкулсен умне вĕсен столовăйĕсене пахча çимĕçпе тивĕçтерес тĕллев лартнă. Ку енĕпе хулари тăваттăмĕш номерлĕ шкул "Дуслык" хуçалăхпа 3,5 гектар çĕре тара илме договор тунă. 3 гектар çинче çĕрулми ӳстерĕç, ытти çинче вара - кишĕр, сухан, купăста.

---

## Вĕренекенсем валли лекцисем

***Ноябрĕн 16-мĕшĕнчен тытăнса районти вĕрентӳ пайĕ шкулсенче вĕренекенсем валли çамрăксен центрĕнче лекцисем йĕркеленĕ.***

Пĕрремĕш ушкăнра вĕсене аслă классенче вĕренекенсем валли иртт ернĕ пулсан, хальхинче вара 5-6 классенче вĕренекенсем валли. Ачасемпе районти тĕп больницăн педиатрĕсем, психологĕсем, район администрацийĕн çула çитмен ачасемпе ĕçлекен комиссийĕн секретарĕ тĕл пулаççĕ. Педиатрсем ачасене пирус туртни сиенлĕ пулнине палăртса калаççĕ, грипран сыхланмалли меслетсемпе паллаштараççĕ. Психологсем хăвăра тата ыттисене сиенлемесĕр тĕрлĕ йывăр лару-тăрура мĕнле тухмаллине ăнлантараççĕ. Çула çитмен ачасен комиссийĕнче ĕçлекенсем ачасене йĕркене пăснăшăн пăхса хăварнă айăплав мерисем, çакă ашшĕ-амăшĕсене хакла ларни çинчен ăнланмалла каласа параççĕ.

Çак эрнере вĕренекенсемпе çаплах библиотекăсен ĕçченĕсем тĕл пулĕç.

Пĕрремĕш кунсенче лекцисене ял ачисем итлĕç. Вĕренекенсене Нурлата илсе çитерме майсем тупнă хуçалăхсенче транспортпа çыхăннă ыйтăва татса панă. Лекцисем хыççăн ачасем валли дискотека йĕркелĕç, искусствăсен шкулĕнче концерт кăтартĕç, "Нурлатнефть" НГДУ бассейнне экскурсие илсе кайĕç.

**Лекцисем декабрĕн 10-мĕшĕччен пулĕç.**

***Пирĕн паллă ентеш, ТР Патшалăх Канашĕн депутачĕ Ф.А.Валеев 60 çулта***

# "Халăхшăн ĕçлени мана вăй парать"

Фалес Ахатович Валеев 1938 çулхи сентябрĕн 30-мĕшĕнче Тутарстанти хальхи Нурлат районĕнчи Кăчăканлă ялĕнче çуралнă. Фронтра ашшĕ хыпарсăр çухалнă вăхăтра вăл иккĕ те тултарман пулнă-ха. Арçын ачана асламăшĕ - Минвали пăхнă. Тăлăх ача пĕчĕккĕренех хăйĕн вăйне çеç шанма хăнăхнă, тĕреклĕ те хастар ӳснĕ. Ялта техника мĕнле вырăн йышăннине ăнланса, яш Спасск районĕнчи училище комбайнера вĕренме кĕрет. Вĕренсе пĕтерсе киле таврăнсан, вăл вăй питти арçынсемпе пĕр тан ĕçлеме пуçлать. Çав вăхăтрах вĕренме тăрăшать: ялта пурăнакансенчен пĕрремĕшĕ пулса Хусанти патшалăх университетне вĕренме кĕрсе ăна ăнăçлă пĕтерет.

Хусанта çамрăк чухне туяннă специальноçсем ăна питĕ кирлĕ пулаççĕ: вĕреннĕ вăхăтрах ДОСААФ организацийĕнче мотоциклистсене вĕрентет. Кăнтăрла университет преподавателĕсем Фалеса лекцисем вулаççĕ, каçпа вара вĕсем вырăнĕсемпе улшăнаççĕ, халь ĕнтĕ вăл вĕсене техника вăрттăнлăхĕсемпе паллаштарать. Ытти студентсемпе танлаштарсан, ăна хисеплеççĕ, вăл авторитет çĕнсе илет. Унсăр пуçне каччă хут купăс та лайăх калать, çавăнпа ăна хĕрсем тата та кăмăллаççĕ, анчах та вăл Мензелинскри Кларăна суйласа илет. Студент - юлташсем, преподавательсем пĕрле пуçтарăнса вĕсен туйне тунă. Çавăнтанпа вĕсем питĕ килĕштерсе пурăнаççĕ.

Фалес, кунĕ-кунĕпе службăра, Клара вара вĕрентӳ ĕçĕнче вăй хунисĕр пуçне, килти хуçалăха та илсе пынă, ачисене пăхнă. Хальхи вăхăтра вĕсен Фарида хĕрĕн, Фаритпа Алмаз ывăлĕсен хăйсен çемйисем пур ĕнтĕ.

Хăйĕн ĕç биографине комбайнера пулăшакан пулса тытăннă Фалес, университетран вĕренсе тухсан Заинска килет. Кунта учитель, директор пулса ĕçлет.

Çакăнта унăн хуçа пултарулăхĕ лайăх палăрать. Ялта вăл кирпĕчрен типлă шкул хăпартать. Ун çинчен хаçатсенче çыраççĕ. Çынсем Фалес Ахатовича питĕ хисеплеççĕ, районти ертӳçĕсем те ăна тимлĕх уйăрмасăр хăвармаççĕ. 1971 çулта Фалес Валеева районти чи пысăк хуçалăхсенчен пĕрне, "Якты юлдыз" хуçалăха, сакăр яла пĕрлештерсе тăракан скере, ертсе пыма хушаççĕ. Фалес Ахатович тăрăшнипе вăл районта ялан малта пыракан хуçалăхсен хушшинче пулнă. Ялта пурăнакансем вĕсемшĕн тăрăшакан ертӳçе халь те ырă сăмахпа çеç асăнаççĕ. Унтан вăл ял хуçалăх управленийĕн начальникĕ, Саратоври аслă парти шкулне вĕренсе пĕтернĕ хыççăн халăх контролĕн хула комитечĕн председателĕ пулса вăй хунă. Ăста ĕçлесен те вăл ялан анлă тавракурăмлă пулнипе, ĕçе пысăк шайра йĕркелеме пĕлнипе палăрса тăнă. Хăй вара Фалес Ахатович çĕр ĕçне суйласа илет. 1986 çулта хулари парти комитечĕн бюровĕнче хуçалăхсем хушшинчи аш туса илекен пĕрлешӳ ĕçне пăхса тухнă. Бюро членĕсем кая юлса пыракан çак хуçалăха ертсе пыма вăйлă ертӳçĕ лартмалла тесе пĕтĕмлетӳ тăваççĕ. Анчах та ун пеккине ăçтан илмелле-ха? Çак вăхăтра Валеев, бюро членĕсене тĕлĕнтерсе, хăйне лартма ыйтать.

Чылайăшĕ унăн йышăнăвне шухăшламасăр, васкавлă тесе хаклаççĕ: "ăшă вырăна" хăварса кая юлса пыракан хуçалăха ху çине илесси - кăна чылайăшĕ пултараймаççĕ. Çапах часах Ф.А.Валеев хăй тĕрĕс суйласа илнине çирĕплетет. Хуçалăхсем хушшинчи пĕрлешӳ, каярах "Заинский" совхоз, хальхи вăхăтра ялти "Заман" производство кооперативĕ хăйĕн кăтартăвĕсемпе савăнтарать. Аш хатĕрлесси кунта икĕ хут ӳснĕ, иртнĕ çул пĕрчĕллĕ культурăсен тухăçне гектартан 50 центнер ытла пухса илнĕ. Кунта кашни çул выльăхсем валли апат çителĕклĕ хатĕрлеççĕ. Юхăнса кайнă ялсем иккĕмĕш хут çуралнă тейĕн: кунта асфальтлă çулсем хывнă, çутçанталăк газĕ кĕртнĕ, çĕршер çурт-хваттер тунă, социаллă, производство объекчĕсем хăпартнă. Чи кирли вара - çынсене ĕçпе тивĕçтернĕ, вĕсем ĕç укçи вăхăтра илме, çителĕклĕ пурнăçпа пурăнма тытăннă.

Ф.А.Валеевăн уйрăм пахалăхĕ - ĕçе парăнни. Унăн тав çырăвĕсем чылай, салтакра танкист пулнă вăхăтра илнисенчен тытăнсах, çаплах Хисеп грамотисем, орденсемпе медальсем. Ăна Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе (1973 çул), Халăхсен туслăх орденĕпе (1993 çул) наградăланă, Тутарстанпа Раççейăн ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ ят панă, 1990 çулта Тутарстан Республикин Президенчĕн Хисеп грамотипе (1990), тĕп органсен тав çырăвĕсемпе наградăланă, вăл "Халăха вĕрентес ĕç отличникĕ" ята тивĕç пулнă.

Çаплах вăл - патшалăх паллă деятелĕ, политик. Хальхи вăхăтра Валеев - Тутарстан Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ, унччен вара Заинск район Советĕнче ĕçленĕ. Çак йывăр вăхăтра вăл Тутарстан суверенитетне хӳтĕлекенсен малти речĕсенче тăнă, тутар чĕлхипе культурине аталантарас тĕлĕшпе нумай тăрăшнă, çакăншăн ăна 1993 çулта Заинск районĕпе хула пуçлăхĕ Соббух Рафиков ячĕллĕ призпа наградăланă.

Ф.А.Валеевăн тусĕсем питĕ нумай, вĕсен шутĕнче республикăн, Заинск хулин паллă çыннисем, писательсем, ученăйсем, журналистсем тата ыттисем.

Фалес Ахатович Валеев - тĕлĕнмелле пултаруллă çын. Чĕрине икĕ хут операци тунине тӳссе ирттернĕскер, вăл хăйĕн 60 çулхи юбилейĕнче те малтанхи пекех ывăнмасăр ĕçлет-ха. Ун пек ертӳçĕсем республикăн ял хуçалăхĕнче сахал пулĕ. "Халăхшăн ĕçлени мана вăй парать", - тет вăл.



1978 çулхи ӳкерчĕк.



**Р.НАЗИПОВ,**
**Заинск район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

# Газ сиен ан кӳтĕр

## е газификацилессин правилисене мĕнле пăхăнаççĕ

"Нурлатгаз" эксплуатаципе производство управленине йĕркеленĕренпе çулталăк çурă çеç иртнĕ пулин те, хулапа района газификацилес тĕлĕшпе вĕсем пысăк ĕç пурнăçланă. Пурĕ çĕр айĕнче 85,44 километр, çĕр çийĕнче 98,1 километр газопровод хывнă, ялсенче 1551 çурт газификациленĕ, хулара - 1468 хваттер. Анчах та заказчиксем пурте газификацилес ĕçе пысăк хăвăртлăхпа илсе пырассине тивĕçтерейменçĕ, çакă пире хумхантарать.

Пĕрремĕшĕнчен, çуртсенчи шалти оборудовани хăшĕ-пĕрисем проектсăр тăваççĕ.

Иккĕмĕшĕнчен, подрядчиксем газопроводпа оборудование монтажлас ĕçсене пурнăçлаççĕ пулин те, заказчиксем (çурт хуçисем) çак ĕçсемшĕн тӳлемеççĕ. Çавăнпа та подрядчиксем ĕç тăвакан техника документацине (ИТД) "Нурлатгаз" ЭПУа памаççĕ. Унсăрăн вара пирĕн организаци çуртсене, хваттерсене çутçанталăк газĕ яма пултараймасть. Çакăн пек чухне хăшĕсем газа хăйсем тĕллĕн çыхăнтараççĕ. Тĕслĕхрен, 1997 çулхи мартăн 3-мĕшĕнче Синдряков урамĕнчи çуртсене газ янă. Анчах та заказчик - "Сельхозтехника" акционер обществи - "Нурлатгаз" ЭПУа тивĕçлĕ документсем - ИТД халиччен те тăратман, подряд организацине те тӳлемен.

Е тата тепĕр тĕслĕх. 1997 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче Вăтам Хăмăшлă ялне газ янă. Анчах та заказчик - Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциаци - халиччен теха подрядчикпа - "Татспецстрой" РСУпа - расчет туман. Ку вĕсем "Нурлатгаза" ИТД паманнине пĕлтерет. Çапла майпа хăйсен ирĕкĕпе 44 çурта газ янă, ку "Газ хуçалăхĕнчи хăрушсăрлăх правилисене" пăсни шутланать.

Виççĕмĕш сăлтав çурт хуçисем ют çынсене чĕнсе çурта газопроводпа хăйсен ирĕкĕпе çыхăнтарни. Çапла, 1998 çулхи октябрĕн 13-мĕшĕнче юшкана хупса тата 50 çурта газсăр хăварса Островскипе Кутузов урамĕсенче çак ĕçе пурнăçланă. Тăваттăмĕшĕнчен, пире хваттерсенче газ колонкисене хăйсен ирĕкĕпе лартни хумхантарать. Мĕншĕн тесен Нурлатри чылай хваттерсенче газ колонкисем вырнаçтарассине проектпа пăхса хăварман. Çуртсенче çак газ оборудовани валли тĕтĕм çулĕсем çук. Тĕтĕм каякан пăрăхсене колонкăсем патĕнчен вентиляци каналĕсене яраççĕ, çавна май газ çуннипе пулнă сиенлĕ продуктсем çӳлти-аялти хваттерсене лекеççĕ, унти çынсем сĕрĕмпе наркăмăшланма пултараççĕ.

Автотранспорт, строительство техники газопровод линийĕсене сиенлетни те хăрушлăх кăларса тăратать. Çапла, 1997-98 çулсенче çакăн пек 7 тĕслĕх регистрациленĕ. Сăмахран, кăçал, январь уйăхĕнче 547-мĕш номерлĕ ПМКан битум ирĕлтерекен хуранне куçарнă чухне Ленин урамĕнчи газопровода сиенлетнĕ. Е урăх тĕслĕх. Кăçал, майăн 8-мĕшĕнче габаритлă мар тиевсем турттарнă вăхăтра çак организациех Заводской тăкăрлăкĕнче 30 метр чухлĕ газопровода сиенлетнĕ.

Апрелĕн 10-мĕшĕнче "Элмет" ПМК Лачака ялĕнче полиэтилен газопровода сиенлетнĕ, çапла майпа ял çыннисем пĕр эрне ăшăсăр пурăннă.

Строительствăпа - монтаж ĕçĕсен пахалăхĕ те тивĕçлĕ шайра мар. Тĕслĕхрен, 1997 çулхи декабрь уйăхĕнче Хумаел ялĕнче газопроводсем пĕрлештернĕ 100 мм диаметрлă вырăн 6 тĕлте çурăлнă. Февральте Ленин урамĕнче çакăн пек вырăнсем (4 штук) çурăлнă, октябрьте Андреевка ялĕнче пăрăхсене çыхăнтарнă 159 мм диаметрлă çĕвĕ уйрăлса кайнă. Юлашкинче начар çыпăçтарнă вырăнсем чылай, çак сăлтавпа 50 çурта яхăн газсăр юлнă.

Çак объектри ĕçсене Димитровград хулинчи "Гидромонтаж" АОн 14-мĕш МСУ пурнăçланă.

Çӳлерех асăннă тĕслĕхсем тĕлĕшпе административлă мерăсем йышăннă.

Çаплах "Сельхозтехника" акционер обществин тата Мичурин ячĕпе хисепленекен ассоциаци ертӳçисене асăрхаттарас килет: палăртнă срокчен çитменлĕхсене пĕтермесен газ парассине чарĕç.

Хулапа районта пурăнакансене те аса илтеретпĕр: çурта (хваттере) газификацилес ĕçшĕн кăçал 1,5-2,5 пин тенкĕ тӳлемелле пулсан, 1999 çулта вара çак сумма 6 пин тенке çитет.

**Н.МОКРИКОВ,**
**"Нурлатгаз"ЭПУ тĕп инженерĕ.**

# "Комбайн" хăйĕн тĕрекне çухатать

*Уççăн каласа*

Тахçан ăнăçлăхсемпе, уйрăмах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессинче палăрса тăракан "Комбайн" хуçалăхри ларутăрăва лайăх тесе калама çук. Ахальтен мар "Комбайн" хуçалăхри выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç шайне уйрăм тишкерсе тухатпăр - унти хальхи ларутăру питĕ пăшăрхантарать. Вăл халь çеç пулса кайман вĕт, çултан çул ӳссе пыракан çитменлĕхсене тимлĕх уйăрманнипе пулнă. Уйăх каялла пысăк шайра çакăн пек тĕлĕнмелле факт пĕлтерчĕç: октябрь уйăхĕнче "Комбайн" хуçалăхра 22 пăру илнĕ, çав уйăхри отчетра, хуçалăхри специалистсем тăратнăскерте, çавăн чухлех выльăх вилнĕ тесе палăртнă. Ку ăнсăртран мар, юлашки çулсенче çирĕплетнĕ пулăм, çавăнпа та "çӳлтисене" çакă хумхантарать.

Цифрăсем илсе кăтартар-ха: 1995 çулта хуçалăх 7440 центнер сĕт суса илнĕ пулсан, тепĕр çул ку кăтарту 1186 центнер чакнă. Чăнах та иртнĕ çул амзясем çак кăтартăва чылай çĕклеме пултарнă, анчах сăвакан ĕнесен продуктивлăхĕпе хуçалăх аялтан иккĕмĕш вырăнтан çӳлерех çĕкленме пултарайман. Кăçал та 10 уйăх хушшинче хресченсен хуçалăхĕсен "Комбайн" ассоциацийĕ пĕр ĕне пуçне сутнă сĕт кăтартăвĕпе (малашне шăпах çак критерие илеç-çĕ) кая юлса пыраканнисен хушшинче. Шел, ĕçсем лайăхланас шанчăк та пачах çук - хальхи вăхăтра кунтан сĕт-çу комбинатне кун сиктерсе 6-8-шар центнер сĕт ăсатаççĕ. Çав вăхăтрах выльăх йышĕн шучĕпе продукци калăпăшне пысăк шайра тытса тăма пултаракан хуçалăхсем пур вĕт-ха. Шел, кунта та "Комбайн" хуçалăхăн малашлăх çук. Кунтан тĕлĕнмелли çук, мĕншĕн тесен 1996 çулта 46 пушмак пăруран пĕрне те сăвакан ĕнесен кĕтӳне куçарман, пĕлтĕр те ăна 8 процент çеç çĕнетнĕ. 1996 çулта мăйракаллă шултра выльăх йышĕ 100 пуçа яхăн юлнă. Отчетсем тăрăх ку кăтартăва ноябрь уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне пĕлтĕрхи шая çитернĕ пулин те, чăннипех вара ĕнесен тата ытти мăйракаллă шултра выльăх йышĕ сахалрах. Юлашки пилĕк çул хушшинче ĕне выльăх йышĕ 500 пуç чакнă, çав шутра ĕнесем - 73 пуç. Çакăнтан тĕлĕнмелли те çук ĕнтĕ, пăрусем илес тĕлĕшпе хуçалăх районтачи юлашкисен шутĕнче. 80-мĕш çулсенче 100 ĕне пуçне 97 пăру, 1990 çулта вара 103 пуç таранах илнĕ пулсан, 1996 çулта 40 пуç, пĕлтĕр 52 пăру, кăçалхи 10 уйăх хушшинче вара ку кăтарту пурĕ те 49 пуç çеç шутланать (ку кăтартусем районта чи пĕчĕккисем). Унсăр пуçне пĕлтĕр 80 пуç ĕне выльăх вилнĕ (унччен хи çулхипе танлаштарсан, 1,5 хут ытларах). Кунта тӳрре тухмалли сăлтав çук, тата репродуктивлă выльăх йышĕн çурри пăруламаннине шута илмелле (юлашкине çапла ăнлантармалла пулĕ: çамрăк выльăх илекен отчета çуралнă хыççăнах вилнĕ пăрусене кĕртмеççĕ пулас). Сăлтавĕ вара куç умĕнчех. Кунта пăрусене сивĕ çĕрте усрамалли меслетпе лайăх усă курмаççĕ. Хăй вăхăтĕнче "сивĕ меслет" çине йăвантарса пăрусен витисенчи чӳречесене илни мĕн патне илсе пынине тавçăрса илме йывăр мар, пăру пăхакансем те кун çинчен уççăнах калаçаççĕ. Çак меслетĕн технологине çирĕп пăхăнса вăй хуракан хуçалăхсем ăнăçлăхсем тăваççĕ вĕт-ха. Тĕслĕхрен, РСУн хушма хуçалăхĕнче, амзясенчен ĕç условийĕсемпе те, çĕр пулăхлăхĕпе те уйрăлса тăманскерте, иртнĕ çул 100 ĕнерен 96 пăру илнĕ, кăçалхи 10 уйăх хушшинче ку кăтарту 92 пуç шутланать ĕнтĕ. Çавăнпа та "Комбайн" ассоциацире ял хуçалăхĕнче усă куракан 100 гектар пуçне 17,6 пуç мăйракаллă шултра выльăх тивет пулсан, Козлов ячĕпе хисепленекен хуçалăхра (РСУ) - 32 пуç. Сăвакан ĕнесем те усă куракан 100 гектар пуçне "Комбайн" хуçалăхра пурĕ те 7,5 пуç кăна тивет, çакă районта чи пĕчĕк кăтартусенчен пĕри шутланать. Калăпăр, Чурапаттăр бригадинче хăй вăхăтĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç питĕ лайăх пынă, витесем те çав вăхăтри требованисемпе килĕшсе тăнă. Халь вара кунта обществăлла выльăх йышĕ пачах та çук, çав шутра сурăхсем те. Ĕç пулмасан çынсен кăмăлĕ мĕнле пулнине ăнланмалла ĕнтĕ. Лайăх-ха хăть симĕс милĕк хатĕрлесе пама килĕшнĕ. Кунта, вăрман çывăхĕнче выльăхсен пысăк йышне çулталăк тăршшĕпех пĕр хуйхăсăр усрама пĕтĕм услови пур. Шел пулин те, хуçалăхри тĕп усадьбăри фермăсем те халь çурма пушă. Анчах та вĕсене те тимлĕх çитмест, пăхмалли тата апатлантармалли технологие те кирлĕ пек пурнăçламаççĕ. Ку сăвакан ĕнесене те, пăрусене те, ӳстерсе самăртакан ушкăнсене те тивет. Хальхи вăхăтрине пĕлместпĕр, анчах та эпир унта пулнă кун хăш-пĕр витери йĕркесĕрлĕхпе тасамарлăх пире тĕлĕнтерчĕ. Кивĕ Амзяра, сăвакан ĕнесен ферминче çеç йĕркелĕх курăнчĕ. Чуптарнă пушмаксене усракан условисем çинчен каласа парас тесен сăмах тупма та йывăр... Картасем хĕррине пăрахса панă апат патне выльăхсен хырăмĕ таран тислĕк, айне путса аран-аран пыма тӳр килетчĕ. Вĕсенчен мĕнле ĕрчев тата сĕт кĕтмелле?! Ăратлăх ĕçне те тивĕçлĕ шайра илсе пымаççĕ. Темиçе тивĕç пурнăçлакан пĕр ветеринари врачĕ ăçтан ĕлкĕртĕр ĕнтĕ. Зоотехник пулса ĕçлекене пĕлтĕр сысна фермин заведующине лартнă. Сăмах май каласан, çак отрасльти ĕçсем те çитес çывăх вăхăтра майлашăнса каясса шанмалли çук. 80-мĕш çулсенче икшер пин çура илекен "Комбайн" хуçалăхра хальхи вăхăтра сысна йышĕ 400 пуçа яхăн шутланать - пилĕк çул хушшинче виçĕ хут чакнă! Пĕлтĕр 400 пуç çура илнĕ пулсан, кĕтĕвĕн пиллĕкмĕш пайĕ вилнĕ. Кăçал 10 уйăх хушшинче 60 пуç сысна вилнĕ пулсан, çурасене те пĕлтĕрхинчен кăшт ытларах кăна илнĕ. Çавăнпа та хуçалăх аш сахал туса илнинчен тата ăна сахал сутнинчен тĕлĕнмелли çук. Çак хуçалăхра ял хуçалăхĕнче усă куракан 100 гектар пуçне аш туса илессин кăтартăвĕ чи пĕчĕкки - пĕлтĕр 11 центнер, кăçал та ку цифрăран инçе каяймĕç пулĕ. Усă курмалли 100 гектар çĕр пуçне аш сутнин кăтартăвĕ районтинчен виçĕ хут пĕчĕккĕрех. Кăçал, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, патшалăха 13 хут сахалрах аш сутнă, пусма ăсатнă выльăх шучĕ тепĕр хут ӳснĕ вĕт-ха. Ăçта-ха результат?

Çӳлерех каласа пани "Комбайн" хуçалăхри выльăх-чĕрлĕх отраслĕпе çиелтен паллашни кăна-ха. Эпир тĕплĕн тишкерсе тухма тĕллев палăртман. Анчах та çакăнтан та пĕтĕмлетӳ тума пулать: укçа ĕçлесе илмелли шанчăклă çăлкуç пулса тăракан отрасль куç умĕнчех юхăнать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе çĕнетсе яма хăвăртрах çирĕп мерăсем йышăнмалла - амзясем кун тĕлне хатĕр-и? Хатĕр пуласса шанас килет.

**Р.ГИЛЬМУТДИНОВ.**

## *Санăн çыннусем, ял*



Марат ачаранах фермăра пулма хăнăхнă, кунта ĕçлекен Галимулла Гамирулловичпа доярка-амăшне Сания Касымовнана пулăшнă. Ун чухнех аслисем вăл выльăх-чĕрлĕхе юратнине асăрханă, ӳссен выльăх ĕрчетекен пулăн, тесе шӳтленĕ. Чăнах та, акă улттăмĕш çул ĕнтĕ Марат ашшĕ-амăшĕн ĕçне малалла тăсать. Ача чухнех кунта ĕçлеме хăнăхни уншăн усăллă пулнă, вăл коллективра хăйсен çынни пулса тăнă, ăна хисеплеççĕ. Аслă юлташĕсем ăна, ашшĕ-амăшĕ пекех, çак профессие улăштармасса шанаççĕ, ĕçлекен çынсем ялан хисепре тата кирлĕ вĕт.

Ӳкерчĕкре: хресченсен хуçалăхĕсен "Чулпан" ассоциацийĕнчи выльăх-чĕрлĕх пăхакан М.Г.Шарафутдинов.

## Ăшă шыва тăкакламалла мар

"Сельхозтехника" микрорайонĕнче пурăнакансен çурчĕсене тинех ăшă пачĕç. Ку тĕлĕшпе Нурлатри ăшă сечĕсен предприятийĕ пысăк ĕç пурнăçланă. Анчах та предприяти умĕнче тепĕр йывăрлăх тухса тăчĕ: ăшăтмалли системăран законсăр шыв илнĕ тĕслĕхсем нумайланчĕç. Эпир шутланă тăрăх, çак участокра талăкне 80 кубла метртан пуçласа 150 кубла метр шыв çухалать. Малашне те çапла пулсан, çак микрорайонта шыв хатĕрлеме укçа-тенкĕ çитмест, çавăнпа та çуртсене хутса ăшăтассине чарма пултараççĕ.

Тата акă мĕн. Шыв илнипе НПТС экономика енчен пысăк тăкак тӳсет: шыв ăшăтма газ, электроэнерги нумай кирлĕ, пăрăхсене сыхлама усă куракан тăвар та пĕтет. Кун çинчен эпир хаçатра пĕрре мар çырнă ĕнтĕ, анчах та тепĕр хут асăрхаттарас тетпĕр: ăшă системинчен илнĕ тĕрлĕ кислотасем янă шывпа усă курни çын сывлăхĕшĕн питĕ сиенлĕ. Чылай çуртсенче ăшăтмалли система сивĕ шыв кранĕпе çывăх вырнаçнипе ĕçмелли шыв ăшăтмалли системăри шывпа хутшăнма пултарать, çакна пула тĕрлĕ чирсемпе чирлеме пулать.

Юлашкинчен çак микрорайонта пурăнакансене асăрхаттарас килет: çак участокра, 2-мĕш номерлĕ котельнăй ăшăтакан Тельман, Синдряков, Гиматдинов, Ст.Разин урамĕсенчи çуртсене тĕрĕслеме эпир кулленех рейдсем ирттерме планлатпăр. Айăплисем тĕлĕшпе административлă мерăсем йышăнăпăр. Анчах та ăшăтмалли системăран шыв илни мĕн патне илсе пырассине эпир çынсем хăйсемех ăнланĕç тетпĕр.

**Ф.ГИЗЗАТУЛЛИНА,**
**НПТС инспекторĕ.**

## Ыр кăмăллăх акцийĕ иртет

*РАÇÇЕЙРЕ, ТĔНЧЕРЕ*

Хабаровск хулинче "Ырă кăмăл" акци ирттересси çинчен пĕлтернĕ. Çавăнпа та хулари социаллă хӳтлĕх пайĕсенче укçа-тенкĕ, апат-çимĕç, ача-пăча тумтирĕ йышăнма тытăннă. "Ырă кăмăл" акцин тĕп тĕллевĕ: сахал тупăшлă çемьесенчи ачасене май килнĕ таран пулăшу парасси. Социаллă службăсем пĕлтернĕ тăрăх, Хабаровск хулинче хальхи вăхăтра питĕ чухăн пурăнакан çемьесенче вăтăр пин ытла ачана шута илнĕ.

**(ИТАР-ТАСС).**



Н.Азизов фотоэтюччĕ.

*Уяв юррисем*

# Тапă хума каятăп

- Ăçта каян Михала?
- Улăх хыçне каятăп.
- Улăх хыçне мĕн тума?
- Тапă хума каятăп.

- Сан таппăна мĕн лекет?
- Сарă кайăк, çав лекет.
- Кайăкна кама паран?
- Сар инкене паратăп.

- Инкӳ сана мĕн парать?
- Вăта çĕрне вырттарать.
Вăта çĕрне вырттарать,
Çупăрласа çывратать.

**Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.**

# Сире концерта кĕтетпĕр!

**Виталий Агапов - Нурлат сцени çинче.**
**Куракансем ыйтнипе декабрĕн 1-мĕшĕнче Нурлат районĕн культура çуртĕнче паллă композитор-юрăçăн Виталий Агапован тата унăн концерт ушкăнĕн концерчĕ пулать.**




**Концерт 19 сехетре пуçланать, билет хакĕ 20 тенкĕ.**

# “Шанăç телефонĕ”



1998 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнчен тытăнса Нурлатри ГРОВД “шанăç телефонĕ” ĕçлеме тытăнать, вăл ку е тепĕр сăлтава пула хăйсен вăрттăн пĕлтерĕвне никам та ан пĕлтĕр текенсенчен информацисем илес тĕллевпе ĕçлĕ, çаплах эпир милици ĕçĕн эффективлăхне ӳстерес тĕлĕшпе сĕнӳсем кĕтетпĕр.

“Шанăç телефонĕпе” преступление уçса палăртма пулăшакан сведенисем пама пулать; милици ĕçĕнчи çитменлĕхсене тата негативлă фактсене палăртма пулать.

Шанăç телефонĕ: 2-12-30, вăл ирхине 9.00 сехетрен тытăнса 11.00 сехетчен тата 15.00 сехетрен тытăнса 17.00 сехетчен ĕçлет.

“Шанăç телефонĕ” малашне талăкĕпех ĕçлĕ тесе шутлаççĕ, ун çинчен каярах пĕлтерĕпĕр.

Абонентăн вăрттăнлăхне гарантилет.

**Нурлатри ГРОВД штабĕ.**

# Халăх медицини



## Сухан тасатать

Шăнса пăсăлнипе хăлха ыратсан, сухан лайăх пулăшать. Пуçлă сухан касăкĕсене ваткăпа тухса ӳкмелле мар чĕркемелле те хăлха шăтăкне, анчах шалах мар, чикмелле. Ыратни иртет, питĕрĕннĕ сăмса та уçăлать. Çитĕннисем çак мелпе сăмса юхнă чухне сипленме пултараççĕ, анчах сухан вăйлă сунаслаттарать. Сухан сĕткенне вĕретнĕ шывпа çурмалла хутăштарса сăмсана тумлатни ăна хăвăрт тасатать.

## Ӳслĕкрен - сĕтпе

Ӳслĕкрен хăтăлма вĕри сĕте минераллă шывпа хутăштарса (çур стакан сĕт - çур стакан боржоми) е пыл ярса (пĕр стакан сĕте - пĕр чей кашăкĕ пыл) ĕçни пулăшать. Пĕчĕк ачасене хытă ӳсĕрнинчен сĕт çине инжир ярса вĕретсе ĕçтереççĕ.

## Сахăрлă кĕтмел

Сивĕ шывра çунă кĕтмеле аш арманĕпе авăртса сахăрпа хутăштармалла (1 кг. çырла - 1 кг. сахăр), банкăна тултармалла, анине пергамент хучĕпе тачă витсе çыхмалла. Желене холодильникре е нӳхрепре упрамалла. Кĕтмелтен хатĕрленĕ желе вăраха кайнă пиелонефритран сипленме тата чĕре чирĕсемпе аптракансене шăк анассине вăйлатма пулăшать. Кунне 2-3 хут 200 мл. вĕретнĕ шыва 2 апат кашăкĕ желе ярса ĕçмелле.

## Сиенлес марччĕ

Апат çинĕ хыççăн уйрăмах улма-çырла çинĕ, йӳçекрех карамель е сĕткен ĕçнĕ пулсан, тӳрех шăл тасатмалла мар, 1 сехет те пулин тăхтамалла. Унсăрăн улма-çырла кислотисем вĕсене щеткăпа шăлсем тăрăх сătăрса янă май шăл тунисене сиенлеме пултараççĕ. Панулми, иçĕм çырли, цитрус çимĕçĕсем, слива, персик, ананас çинĕ хыççăн питĕ асăрханулла пулмалла.

## Чуста пулăшнипе

Радикулитран ыраш чустипе сипленме пулать. Ыраш çăнăхне шывпа хутăштарса чуста çăраççĕ. Çĕпре ямалла мар. Чуста йӳçсен ăна тăваттăлла хутлатса пилĕке хуплана марля çине 1-2 см. хулăнăш сĕреççĕ. Малтан чустана 30 тумлам скипидар хушма юрать. Компреса 10 кун хушши кунсерен каçхине çывăрас умĕн хураççĕ, унпах çĕр каçаççĕ.

## Сывлăш пӳлĕннинчен

Чĕре аорти сарăлнипе сывлăш пӳлĕнсе аптракансене укроп çămăллăх кӳме пултарать. Укроп курăкне е вăррисене апат кашăкĕ илсе 1,5 стакан тин вĕренĕ шыва ярса пиçĕхтерсе лартăр. Хатĕр шĕвеке пĕр кун хушшинче ĕçсе ямалла. Катăркасăн типĕтнĕ çырли те усăллă. 2 апат кашăкĕ вĕтетнĕ çырлана 1,5 стакан тин вĕренĕ шывра пиçĕхтерĕр. Пĕтĕм шĕвеке кунне 3 хут апатчен çур сехет маларах ĕçсе пĕтермелле.

## Пĕвершĕн лайăх

Пĕвер чирĕсенчен сипленнĕ чухне хĕрен настойĕ е сĕткенĕ ĕçме сĕнеççĕ. Çулçисене вара пĕвер хытсан ун тĕлне ăшăтса тытаççĕ. Тата тепĕр лайăх рецепт: хĕрене теркăламалла, 4 апат кашăкĕ ăсса илсе пĕр стакан сĕт çине ярса пăтратмалла, вут çине лартса вĕрилентермелле, анчах вĕреме кĕртмелле мар. Унтан, плита çинче 5 минут пиçĕхтерсе лартнă, хыççăн, сĕрсе пĕчĕккĕн ĕçмелле. Çакăн пек темиçе кун сипленсе пурăнмалла.

**01 ПĔЛТЕРЕТ * 01 ПĔЛТЕРЕТ**

## Замыкани пулнă

1998 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче Нурлатра Южная урамĕнчи 9-мĕш çуртра, И.Файзуллинан хуçалăхĕнче пушар тухнă. Сăлтавĕ электричество пралукĕсем пĕрлешнинче. Кил хуçи хĕрарămĕ чăхсем валли тунă хушма витере çутă сӳнтермен. Çакна ăнланмалла. Хĕллехи сивĕсем пуçлансан чылайăшĕ витесенче ăшă пултăр тесе çутта сӳнтермеççĕ.

Уйрăм хуçалăхсенчен чылайăшĕнче электропроводкăсене правилăсене пăсса кĕртнĕ, электролампочкăсен плафонĕсем çук тата электричество пралукĕсен вĕçĕсене изоляцилемен тĕслĕхсем те пулаççĕ.

Ноябрĕн 18-мĕшĕнче Гиматдинов урамĕнчи 15-мĕш номерлĕ çуртра пушар тухнă. Р.Рахманкулован хуçалăхĕнчи мунча çунма тытăннă. Пушар сăлтавĕ кăмака ытлашши хĕрсе кайнинче.

*Кулса илер-ха*

## Чухăн кĕрӳ кирлĕ мар

*Каç пулттипе пĕр каччă пĕр çурт умĕнче арçынна тĕл пулать те:*

*- Калăр-ха, тархасшăн, халĕ миçе сехет? - тесе ыйтать.*

*- Вун пĕр, - хуравлать лешĕ.*

*- Вун пĕр?! Ăçта çĕр каçмалла-ши кĕçĕр? Вăхăчĕ нумай. Хваттере ямастăр-ши?*

*- Янă пулăттăм та... анчах килте ман çитĕнсе çитнĕ хĕрĕм пур çав...*

*- Пит аван. Тен, пĕр-пĕрне юратса пăрахăпăр та мăшăрланăпăр.*

*- Э-э, çук, çу-ук! Мана сехетсĕр, хваттерсĕр кĕрӳ кирлĕ мар!*

# ПĔЛТЕРӲСЕМ

## Сутатпăр:

*Тĕрлĕ тĕслĕ кăтартакан “Славутич” телевизор. Адрес: Циолковский урамĕ, 7-37, 18 сехет хыççăн пымалла.*

* * *

*Çĕнĕ çĕвĕ машини (алăпа). Телефон: 2-19-87.*

* * *

*Упаковкăри çĕвĕ машини (электричествăпа ĕçлет, Японире туса кăларнă). Телефон: 5-12-72.*

## Тĕрли:

*2 пӳлĕмлĕ хваттере пĕр пӳлĕмлипе улăштаратпăр (хушса тӳлесе). Адрес: Заводская урамĕ, 5-15.*

* * *

*Зульфат Минегараевич Шавалиев ячĕпе панă водитель удостоверенине тупакана тавăрса пама ыйтатпăр. Парне пулать. Телефон: 2-14-28.*

* * *

*“Агростройсервис” ООО пенсионерсене çăмăл автомашинăсене пенси шутĕнчен юсассипе услугăсем парасси çинчен пĕлтерет. Пирĕн адрес: Заводская урамĕ, 1. Лицензи Б-97 024312 N.*

* * *

*Ноябрĕн 26-мĕшĕнчен тытăнса универмагăн 1-мĕш хутĕнче, çаплах япаласем сутакан пасарта 2-мĕш залĕ патĕнче шăматкунпа вырсарникунсенче Ульяновскри фабрика туса кăларнă ată-пушмак сутаççĕ.*

**Авторезина щипласси. Шипланă авторезина. Леçсе паратпăр. Лицензи номерĕ Б-97 288882. Телефонсем: 5-35-91, 2-35-59.**

**“НН” НГДУн Нурлатри технологи транспорчĕн управленийĕ конкурспа ĕçе чĕнет: автоэлектриксене, ЦА-320 машинистне, ППУ/АДП машинистне, телевышка машинистне, çĕклев агрегачĕн машинистне.**
**Ĕç стажĕ 3 çултан кая мар пулмалла. Нурлатри УТТ кадрсен пайĕнче ыйтса пĕлмелле, телефон: 65-5-12 (НУРБ коммутаторĕ урлă).**

***М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.***
***Пирĕн патра кăна!***
*Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!*
*Сипленĕ кун, эрнекун, ноябрĕн 27-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче 12 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.*

Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухать, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 4560